Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

32 (7563) № * Шăмат кун, 2008 çулхи апрелĕн (ака) 26-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

И.Я. Яковлев çуралнăранпа - 160 çул

## Турра ĕненĕр, Раççее юратăр, çемйĕре упрăр

Кĕçнерни кун Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче И.Я. Яковлев çуралнăранпа 160 çитнине халалласа савăнăçлă пуху иртрĕ. Унта ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров Аслă вĕрентекенĕмĕрĕн ятне асра тытса, унăн халалне пурнăçа кĕртсе паян республикăра тăвакан ĕçсем пирки тĕплĕн каларĕ.

- Чăваш халăхĕн уйрăмах хисеплĕ, Улăп пек паттăр ывăлĕсенчен пĕри вăл - шăпах пирĕн ĕмĕр-ĕмĕр мухтавлă Иван Яковлевич Яковлев. Мĕншĕн тесен хăй вăхăтĕнче чăваш халăхĕн çырулăхĕ те, професси шайĕнчи искусство та пулман тапхăрта, пирĕн Аслă вĕрентекенĕмĕр тăван халăха пуласлăх çулне, пĕлӳпе çут ĕç çулне, шанчăк çулне кăтартса панă, - палăртрĕ Президент.

Ларура республика тулашĕнчен килнĕ хăнасем те йышлă пулчĕç. Мускавран Аслă вĕрентекенĕмĕрĕн мăнукĕн хĕрĕ Л.Д. Некрасова хăйĕн мăнукĕпе Леонпа килсе çитнĕ. Тутарстанран, Пушкăртстанран, Ульяновск, Самар облаçĕсенчен пысăк делегацисем хутшăнчĕç.

## Тирпей-илемшĕн кашнин тăрăшмалла



*Муркашра Республика кунне хатĕрленессипе ĕçсем сарăлсах пыраççĕ. «Парнас» строителĕсем физкультурăпа спорт комплексне хута ярассишĕн талăкĕпех тимлеççĕ. «Чувашавтодор» ĕçченĕсем асфальт çул сарассипе тăрăшаççĕ. Муркашри тĕрлĕ кантурсенче ĕçлекенсем те çак ĕçе хăйсен тӳпине хывма тăрăшаççĕ. Иртнĕ кĕçнерни кун, эрне кунсенче урамсемпе тăкăрлăксене тата тепĕр хут тирпейлерĕç, илем кĕртрĕç.*

*Сăн ӳкерчĕкре: район администрацийĕн ĕçченĕсем Гагарин урамĕнчи тăкăрлăка тасатрĕç. Шел пулин те, çывăхри çуртсенче пурăнакансем вĕсене пулăшма васкамарĕç.*

***В. ЛАВРЕНТЬЕВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Мăн кун пĕтĕм тĕнчери христиансемшĕн мĕн пур уявсен уявĕ, савăнăçсен савăнăçĕ пулса тăрать. Вăл ырăпа тĕрĕслĕх усала, пурнăç вилĕме çĕнтернине пĕлтерет. Христос чĕрĕлсе тăнă кун пирĕнтен кашниех пĕр-пĕрне «Христос чĕрĕлнĕ!», «Чăн чĕрĕлнĕ» тесе вичĕ хутчен саламлаççĕ.

Юлашки çулсенче çынсенче ĕненӳ туйăмĕ ытларах палăрма пуçларĕ. Çакă эпир чунпа пуян пулма тăрăшнине, ырăлăх енне туртăннине кăтартса парать. Апла пулсан çынсем пĕр-пĕрне кӳрентермесĕр, усал ĕçсем тумасăр пурăнас шанчăк ӳссех пырать. Туррăн эпир пурте пĕлекен виçĕ халалĕ пире тĕрĕс çулпа утма, çывăх çынсене пулăшма, пĕр-пĕринпе ăш пиллĕ пулма вĕрентет. Турăшăн эпир пурте тăвансем. Çавăнпа та пурте çывăх тăвансем пек пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесчĕ, пурăнасчĕ. Çак ырăлăх туйăмĕ чуна лăпкăлăх кӳтĕр, пире хамăр вăя ытларах шанма пулăштăр. Ку питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен лăпкă чунпа, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурнăçланă ĕç ăнăçуллă пулать. Ăнăçу вара паян пире кашни утăмрах кирлĕ: çур акине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттермелле, хамăрăн тавралăха тирпей-илем кӳмелле, Республика кунне тивĕçлипе хатĕрленмелле, çĕнсе илнĕ чикĕсенчен иртсе тата та сулмаклăрах утăмсем тумалла.

Сире пурне те Мăн кун ячĕпе саламлатăп. Чĕрĕрсенче ыр кăмăл иксĕлми пултăр: Мăнкунра, Ырă ĕçсен çулталăкĕнче çеç мар, мĕн ĕмĕр тăршшĕпех çак туйăм сире вăй-хал парса пытăр. Пĕр-пĕрне май килнĕ таран пулăшма тăрăшар. Районăмăр кунран-кун чечеклентĕр, çĕклентĕр тесе малалла та пĕр шухăш-кăмăлпа ĕçлер. Пĕр тĕллевлĕн вăй хурсан йывăрлăхсене çĕнтерме те çăмăлрах.

Пурне те çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатăп. Турă сире, сирĕн çемйĕрсене инкек-синкекрен сыхлатăр, йывăр самантсенче çăмăллăх кӳтĕр, сирĕн пурнăç çулне уçса пытăр. Вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă Христосăн ырăлăхĕ яланах сирĕнпе пултăрччĕ.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Районти парламентра

## Черетлĕ лару пулчĕ

Юн кун депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 25 ларăвĕ ĕçлерĕ. Ăна депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ И.В. Николаев ертсе пычĕ.

Депутатсем «Муркаш районĕнче потребительсен рынокне 2008 – 2010 çулсенче аталантарасси çинчен» районăн тĕллевлĕ программине йышăнчĕç.

«Муркаш районĕнче вĕрентӳ ĕçне 2007 – 2010 çулсенче аталантарасси çинчен» районăн тĕллевлĕ программине пурнăçланине пăхса тухрĕç.

Чăваш Республикинчи Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлама конкурс ирттерессин положенине çирĕплетрĕç.

Муркаш район бюджетне 2007 çулта пурнăçланине пăхса тухрĕç.

Тĕрлĕ ыйтусемпе депутатсен районти Пухăвĕн унччен йышăннă решенисене улшăнусем кĕртрĕç.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвне район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хутшăнчĕ.

Çур аки

**СУРХИ АКА-СУХА ĔÇĔСЕНЕ ВĔÇЛЕНĔ ЯТПА САЛАМЛАТĂП!**

«Восток» хуçалăх ертӳçине М.Н. Шишокина, механизаторсемпе водительсене, хуçалăх ĕçченĕсене ир акмалли тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене акса пĕтернĕ ятпа чун-чĕререн саламлатăп. Сире пулас тыр-пул шăпишĕн çунса тăнăшăн, тăрăшуллă ĕçшĕн тав тăватăп.

Çавăн пекех çур аки «Свобода», «Оринино», Е.Андреев ячĕллĕ, «Герой» хуçалăхсенче те вĕçленсе пырать. «Бархаткин», «Ямангеев», «Толстов» хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче те çурхи ĕçсем кал-кал пыраççĕ. Районти ытти ял хуçалăх предприятийĕсен те паян, асăннă хуçалăхсенчен тĕслĕх илсе, ĕç хăвăртлăхне ӳстермелле.

Ял ĕçченĕшĕн хĕрӳ тапхăр пуçланчĕ çеç. Умра пысăк задачăсем тăраççĕ: ытти ял хуçалăх культурисене акса-лартса хăвармалла, вĕсем тухăçлă çитĕнччĕр тесе тимлемелле. Сире пурне те çирĕп сывлăх, телей, çак çăмăл мар, анчах çăкăр çитĕнтерекенĕн пархатарлă ĕçĕнче ăнăçу сунатăп. Çемйĕрсенче килĕшӳпе тату пурнăç хуçалантăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Район уй-хирĕсенче

**Ĕнерхи кун тĕлне районĕпе кĕрхи культурăсене 87,6 процент минераллă удобренисемпе апатлантарнă тата сӳреленĕ; нумай çул ӳсекен курăксене 36,3 процент апатлантарнă; 82,5 процент çĕртме сухи тунă; ака ĕçĕсем туса ирттерме 50,4 процент çĕр хатĕрленĕ; 33,6 процент ака ĕçĕсем пурнăçланă. «Герой», Ильич яч. хис. хуçалăхсенче пĕр çул ӳсекен курăксене акма пуçăннă.**

Çурхи ырă ĕçсен эрни

## Ачасем ватăсене концерт кăтартрĕç

Ырă ĕçсен эрнинче Муркашри ача-пăча искусство шкулĕн вĕренекенĕсем Турайри ваттисен çуртĕнче пулчĕç. Кунти ватăсене вĕсем чăваш тата вырăс халăх юррисемпе саламларĕç, чăваш тата спорт ташшисем парнелерĕç.

Ветерансем илемлĕ концертшăн çамрăк тусĕсене чĕререн тав турĕç, тутлă апат-çимĕçпе хăналарĕç.

## Ветерансем Каршлăхра пуçтарăнчĕç

Мăн Сĕнтĕрти, Турайри ваттисен çурчĕсенче пурăнакан ватăсем Каршлăхри ветерансен çуртĕнче пурăнакансемпе тĕл пулчĕç.

Кăсăкли кунта хăнасемшĕн сахал мар пулчĕ. Ватăсем кунти мăнастире çитсе курчĕç, сăваплă çăл куç шывне астиврĕç.

Ĕçпе вăрçă ветеранĕсем çамрăклăх çулĕсене аса илчĕç, яш чух юрланă юрăсене юрларĕç, сăвăсем вуларĕç.

Кун йышши тĕл пулусене вĕсем çуллен ирттерме калаçса татăлчĕç.

## Çамрăк парламентарисем те хастар

Ĕнер депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнчи çамрăксен парламенчĕн членĕсем иртнĕ 23 лару итогĕсене, район экономикин аталанăвĕн 1 кварталти кăтартăвĕсене пăхса тухрĕç.

Калаçса çитет терĕç те çамрăк парламентарисем, 11 çухрăм тăршшĕ Муркаш – Москакасси çула тасатма тухрĕç. Çавăн пекех вĕсем Муркашри Ача-пăча паркĕнчи клумбăсене пăхса тăма пулчĕç. Çитес эрнере кунта чечексем лартĕç.

Çав хушăрах çамрăксен парламенчĕн членĕсем хăйсен вăйĕпе ваттисен çурчĕсенче концертсем кăтартма хатĕрленеççĕ.

Ыр кăмăллăх марафонĕ

## *Ырă тума кая мар*

Ыр кăмăллăх марафонĕ районта малалла пырать. Çак кунсенче районти 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн тата патшалăх пушар надзорĕн уйрăмĕ 1600 тенкĕ укçа куçарчĕ. Çапла вара паянхи кун тĕлне районта ятарласа уçнă счет çинче пĕтĕмпе 59008,20 тенкĕ укçа пуçтарăнчĕ.

Хисеплĕ вулаканăм, ырă ĕç тума нихăçан та кая мар. Апла пулсан марафона хутшăнмасăр ан юл. Çынна ыр туни вара ырăпах таврăнать. Эс куçарнă укçа е ача тумтирĕ ачасемшĕн пулăшу пулĕ, пулăшакана вара – сăвап.

**Л. ПАВЛОВА.**

Республика кунне хатĕрленсе

## *Чунпа тирпейлĕ пулмалла*

Республика кунĕ çитиччен вăхăт 2 уйăхран та катăлчĕ. Халĕ районта хатĕрленӳ ĕçĕсем малалла пыраççĕ. Нумай-нумай туса ирттермелли ĕçсенче чи малтан пурнăçламалли – хамăр пурăнакан ялсене, урамсене тирпей-илем кĕртесси. Ку ĕç мĕнле пынине куçран вĕçертес мар тесе район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем уйрăм ял тăрăхĕсенчи лару-тăрушăн яваплă пулса тăраççĕ. Çак кунсенче район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ-культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева хăйне çирĕплетнĕ Çатракасси ял тăрăхĕнче пулчĕ, кунти депутатсемпе тата вырăнти активпа тĕл пулчĕ.

Ялсене тирпей-илем кĕртес тесе халиччен мĕн тунă тата мĕн тумалла? Çак ыйту тĕп вырăнта пулчĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.А. Кожевников кашни ялта мĕн тунине, мĕн тумасăр хăварнине йĕркипе палăртса тухрĕ. Мĕн тумалли вара пурнăçланинчен темиçе хут нумайрах. Çырма-çатрасенче, парксенче, урамсенче йĕрке тумалли мăй таран. Шкул ачисем нумай ĕçсем туса ирттереççĕ тавралăха тирпейлес ĕçре. Анчах ял çыннисенчен хăйсен умне, картине хăйсенех тирпейлемеллине ăнланасшăн марри вара палăрать иккен. Вырăнти культура, медицина ĕçченĕсем, вĕрентекенсем, депутатсем кил тăрăх çӳресе ăнлантару ĕçне ирттерни те хăшĕсемшĕн ним те мар иккен. Хапха умĕнчи строительство материалĕсене йĕркелесе кĕртме, хапха умне тирпейлеме васкамаççĕ. Кунта манăн Кашмаш шкулĕн директорĕн Г.П. Ершован сăмахĕсене илсе кăтартасах килет.

– Ачасемпе çырмара йĕрке тунă хыççăнах пĕр хĕрарăм урапапа тăп-тулли ăпăр-тапăр пырса тăкрĕ. Калама та аван мар, ачасем тирпейлеççĕ, асլисем вĕсен ĕçĕ çине сураççĕ.

Чăннипех те, пирĕн таврари тирпейлĕх эпир кашни кун çӳп-çап пуçтарнинче мар иккен. Кашнин чун тасалăхĕнчен пуçланать пирĕн урамри йĕрке. Чунпа тирпейлĕ çын нумай хваттерлĕ çуртăн 2 е 3 хучĕн кантăкĕнчен тин çеç тасатса кайнă лаптăка пушă эрех кĕленчи те, çĕрĕк пан улми те пăрахмасть. Ачасем пуçтарнă урама килти ăпăр-тапăра кăларса та пăрахмасть чунпа илемлĕ ял çынни. Пирĕн хамăрăн психологире йĕрке тумалла иккен малтан. Урăхла мĕнле ăнланан-ха вырăнти хăш-пĕр предприятисемпе учрежденисем, уйрăм çынсем хăйсен çурчĕн таврашне те пуçтарма васкаманнине? Тĕрĕсех пăшăрханать А.М. Максимов депутат:

– Ачасем чăннипех те пысăк пулăшу параççĕ. Анчах çитĕннисем хăнк! та тумаççĕ тесен те юрать. Шупуçĕнче пуçтарнă çулçăсене те çырмана тултарса хучĕç.

Тĕл пулура Ятманти клуб заведующийĕ Р.А. Иванова, Кашмашри фельдшерпа акушер пункчĕн заведующийĕ Т.А. Скворцова тата ыттисем хăйсене çирĕплетсе панă ялсенче тирпей-илем кĕртес тесе мĕн туни çинчен каласа пачĕç.

–Хамăрăн яла, урама, киле, хамăрсăр пуçне никам та пуçтарса памĕ, çавăнпа та ял çыннисемпе ăнлантару ĕçне татах вăйлатмалла, - терĕ Алевтина Евстафьевна.

Пĕрлехи канашлура ялсене тирпей-илем кĕртес ĕçе Мăнкунччен вĕçлеме тĕллев лартрĕç. Çак кунччен пирĕнтен кашниех кил-çурт таврашне хамăр ирĕкпех пуçтарасси ырă йăлана кĕнĕ-çке. Республика кунĕшĕн мар, хамăршăн тумалла тирпейлĕхе. «Илтмĕш» пулакан кил хуçисен тĕлĕшпе административлă протокол çырса явап тыттармаллине палăртрĕç. Ларура хăш ялта хăш вырăнта мĕн тумаллине, çакăншăн яваплисене палăртрĕç. Çакнашкал тепĕр тĕл пулу çитес ытлари кун, апрелĕн 29-мĕшĕнче ирттерме палăртрĕç. Ун чухне çак ларура йышăннине епле пурнăçланине тишкерĕç.

**Л. ТУКТИНА.**

Районти административлă комиссире

## Кил-çурт таврашне тирпейлеменшĕн

Кĕçнерни кун район администрацийĕ çумĕнчи административлă комисси ĕçлерĕ.

Комисси ЧР «Административлă право йĕркине Чăваш Республикинче пăсни çинчен» саккуна пăхăнман граждансене ответ тыттарчĕ.

Ялсене тирпей-илем кĕртмелли правилăсене (10-мĕш статья) пăснăшăн Çаранçырминчи С.Г. Михайлова, З.Н. Федорована, Уйкас Турайри К.И. Иванова 200-шер тенкĕ штраф пачĕ.

Хунтăкассинчи А.М. Кабуркина тата Л.П. Сильвестрова йытăсене тытмалли правилăсене (15-мĕш статья) пурнăçламаншăн 500-шер тенкĕ штраф хучĕ.

Çӳп-çапа, строительство материалĕсене пуçтарса тирпейлеменшĕн Мăн Тутаркасри И.И. Кольцова тата А.М. Адамова 300-шер тенкĕ штраф пачĕ. Мăн Сĕнтĕрти В.М. Поповпа А.С. Моторова асăрхаттарса хăварчĕ.

Апла пулсан ял çыннисен урамсене, кил-çурт таврашне тирпейлессипе хытах тăрăшмалла, йытăсене те сăнчăрта тытмалла.

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Юратнă мăшăра, аттене, кукаçине, хунĕме – Пиккикасси ялĕнче пурăнакан **Владимир Ильич ВАСИЛЬЕВА** ака уйăхĕн 28-мĕшĕнче 55 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.

Утас çулу такăр пултăр, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçланса пыччăр. Пире, 3 хĕрне, тĕрĕс çул çине тăма пулăшнăшăн чĕререн тав сăмахĕ каласшăн эпир сана, аттеçĕм.

**Салампа: мăшăрĕ, 3 хĕрĕ, икĕ кĕрӳшĕ тата мăнукĕ.**